25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
СЕНТЯБРЬ
25
ЭРНЕКУН
224(6159) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МТС-сен Политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Вăрмар МТС-ĕ тăрăх:

101. **Комбайнер А. Ванюков юлташ.** Вăл хăйĕн комбайнĕпе календарлă 20 кун хушшинче 200 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, планра 110 гектар кăтартнă пулнă.

Красноармейски МТС тăрăх:

102. **Трактористка С. И. Иванова юлташ.** Вăл хăйĕн сменинче çулталăкри ĕçсен планне 134 процент тултарнă, 43 килограмм горючи перекетленĕ.

103. **Комбайнер Василий Гаврилов юлташ.** Вăл «Коммунар» маркăллă комбайнпа ĕçлесе 220 гектар çинчи тырпула лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă, плана 227 процент тултарнă, 508 килограмм горючи перекетленĕ.

104. **Комбайнер Е. М. Марков юлташ.** Вăл «Коммунар» маркăллă комбайнпа ĕçлесе 180 гектар çинчи тырпула лайăх пахалăхпа вырса пуçтарнă, плана 225 процент тултарнă, 328 килограмм горючи перекетленĕ.

ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен райсовечĕн исполкомĕ тăратнă тăрăх, тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата пахалăхлă ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ.

105. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи **«Хресчен» колхоз** (колхоз председателĕ **И. Г. Быков** юлташ). Колхоз кĕрхи тырăсене тата çурхи пучахлă культурăсене районра пуринчен малтан пуçтарса кĕртнĕ, сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне вĕсене пурне те капана хывса пĕтернĕ тата тĕштырăсене 50 процент ытла çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă памалли тата çĕрулми тăратмалли плана 100 процент тултарнă. Август уйăхĕнче фермăсем валли 16 пăру тата 26 путек илнĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе тимлĕн пăхса усрар

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрас, выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерес тĕлĕшпе кăтартса панă мероприятисене тата çав енĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ йышăннă постановление тĕплĕн пурнăçласа пырса, обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ÿстерес ĕçре республикăри нумай колхозсем пысăк çитĕнÿсем турĕç. Партипе правительство панă план тăрăх кăçал пирĕн республикăри колхозсен мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 80.000 пуçа çитермелле, колхозниксен килĕсенче 1942 çулта 58.800 пăру пăхса çитĕнтермелле. Лашасен хисепĕ 197.000 пуçа çитмелле, ĕçлекен вăкăрсен хисепĕ 1.500 пуç пулмалла, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 120.000 пуçа çитмелле, сыснасен хисепне 90.000 пуçа çитермелле, кроликсен хисепне 5.000 пуçа тата кайăк-кĕшĕксен хисепне 300.000 пуçа çитермелле.

Çак пысăк та ответлă ĕç мĕнле пурнăçа кĕрсе пырать-ха? Тÿрех калас пулать, выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ÿстерес ĕç хăшпĕр районсенчи колхозсенче япăхрах пырать. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне шута илнĕ тăрăх выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана эпир мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 86,8 процент, сыснасем енĕпе 116 процент, сурăхсем енĕпе 74,2 процент пурнăçланă. Вăл шутра ĕнесем план тăрăх 25.000 пуç пулмалла пулсан, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсен хисепĕ 19.815 пуçа çитнĕ, ама сыснасен хисепне 20.000 пуçа çитермелле пулсан, вĕсем халĕ 19.746 пуç шутланаççĕ, сурăхсен хисепĕ 120.000 пуç пулмалла пулсан, вĕсен хисепĕ 89.055 пуçа çеç çитнĕ. Çакăнтан ĕнтĕ уççăнах лайăх курăнать: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пирĕн татах та тимлĕрех ĕçлемелле, çитменлĕхсене халех пĕтерсе ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешмелле.

Элĕк районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешеççĕ. Çак иртнĕ виçĕ эрне хушшинче вĕсем мăйракаллă шултăра выльăхсене колхозсен фермисене 489 пуç пухса плана 90%, 380 пуç путек пухса плана 90 процент, сысна ĕрчетес плана 153 процент пурнăçларĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пурнăçлассишĕн тимлĕн кĕрешет. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана Калинино, Çĕмĕрле, Комсомольски, Сĕнтĕр тата ытти хăшпĕр районсем те ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Калинино районĕнчи колхозсем плана мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 98,3% сыснасем енĕпе 133,4 процент, сурăхсем енĕпе 86,7 процент пурнăçланă. Малта пыракан районсен примерĕпе республикăри ытти районсенчи колхозсен те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлемелле. Контрактациленĕ выльăхсене халех фермăсене илмелле.

Кĕр çитрĕ, хĕл çывхарса килет. Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхне усрама ăшă та çутă витесем хатĕрлемелле. Фермăсенче халех йĕркелĕхпе тасалăх кÿмелле, выльăх-чĕрлĕхе пурăнма зоотехника кăтартнă пек, лайăх условисем туса памалла. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условире те республикăри чылай колхозсем кăçал обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ, çутă та ăшă витесем туса лартрĕç. Вăрнар районĕ выльăх-чĕрлĕх витисене юсас ĕçе ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Паянхи куна ĕне витисем 18, лаша витисем 14, сысна витисем 17 тĕпренех ремонтласа лартнă. Ĕнесем валли стандартлă витесем 2, чăх-чĕп витисем — 3 çĕнĕрен тунă. Утă, клевер, улăм тата çулçăллă апат хатĕрлес плансене иртттерсе пурнăçланă, 3.700 тонна силос хывнă:

Тăван çĕршыв, пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар колхозниксемпе колхозницăсене выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерес ĕçре çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем тума чĕнеççĕ. Нимĕç фашисчĕсен тискер йыткĕтĕвĕсене çапса аркатма, вăрçă хирĕнче çĕнтерÿ тума Хĕрлĕ Çарăн герой-воинĕсене ытларах апат-çимĕç кирлĕ.

Кувакино районĕнчи колхозсенче çамрăк выльăхсене пăхас ĕçе çирĕп организацилеменнине пула, кăçал пăрусем 49,5 процент, сысна çурисем 6,5 процент, путексем 32,2 процент, тихасем 27,1 процент вилсе пĕтнĕ. Çавăн пекех Канаш, Шупашкар районĕсенче те çамрăк выльăхсем вилни чылай пулчĕ. Шупашкар районĕнчи Иккасси ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн сысна ферминче тасалăхпа йĕркелĕх çуккине пула кăçал 27 сысна çури вилнĕ. Çамрăк выльăхсем çине çакăн пек пăхнине тĕпренех пĕтермелле. Фермăсенче большевикла йĕркелĕх тумалла. Унта ĕçлекен колхозниксен ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, вĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва сăмахпа мар, ĕçре анлăн сармалла. Кашни çамрăк выльăха тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтермелле, выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне татах та вăйлăн ÿстерессишĕн кĕрешмелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана район пĕтĕмĕшлĕн пурнăçлани сахал, плана пур йышши выльăх енĕпе те кашни колхозăн уйрăмăн пурнăçламалла. Кашни колхозăнах хăйĕн фермисене комплектласа çитермелле. Тÿрех калас пулать, çакăншăн паян чылай колхозсенче çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Партипе комсомолăн вырăнти организацийĕсен ĕçĕ фермăсен ĕçĕнче сахал палăрать.

ВКП(б) райкомĕсен, районри çĕрĕç органĕнче ĕçлекен работниксен, ял сенчи коммунистсемпе комсомолецсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăк планне пурнăçлама колхозсен активне мобилизацилемелле. Октябрь явĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва выльăх фермисенче ĕçлекен кашни работнике активлăн хутшăнтарса, выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ÿстерес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тумалла. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли хĕлле мĕн кирлине пурне те хатĕрлемелле. Тума пуçланă витесене туса çитермелле, киввисене юсамалла, тĕплĕн питĕрмелле.

Выльăх-чĕрлĕхшĕн тимлĕн тăрăшса ĕçлесен, эпир çак енĕпе пире государство панă заданисене пурнăçа кĕртетпĕрех.

Уэнделл Уилки господина И. В. Сталин юлташ йышăнни

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ США президенчĕн личнăй представительне Уэнделл Уилки господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Калаçу икĕ сехете яхăн пынă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Социализмлă ăмăртăвăн вăй-хăвачĕ

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче торф уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Фабрикăсемпе заводсене мĕн чухлĕ ытларах торф хатĕрлесе паратăн, çавăн чухлĕ вĕсем лайăхрах ĕçлеме пултараççĕ. Çакна пирĕн предприятире ĕçлекенсем тĕплĕн ăнланса илнĕ. Вĕсен шухăш-кăмăлĕ—ытларах та ытларах торф кăларса тăван çĕршыва, фронта пулăшасси. Чăнах та, малтанхи вăхăтрах эпир, ĕçре хăшпĕр чăрмавсем пулнă пирки, торф кăларассине çирĕп график тăрăх пурнăçласа пырайман. Анчах каярахпа ĕç пачах урăхланчĕ. Чăн малтанах—ĕç вăйĕ хутшăнчĕ, ĕç тухăçлăхĕ ÿсме пуçларĕ. Социализмлă ăмăртăва куллен сарса пыни уйрăмăнах рабочисен ĕçри хастарлăхне çĕклерĕ. Август уйăхĕн программине эпир 176 процент тултарса рекордла çитĕнÿ турăмăр.

Малтанхи уйăхсенчех пирĕн предприятире стахановецсем пĕрерĕн шутланнă. Халĕ, акă, вĕсем вуншарăн шутланаççĕ. Вĕсем хушшинче двухсотниксемпе трехсотниксем те сахал мар. Акă вĕсенчен хăш-пĕрисем: стахановка Трифонова сезон пуçлансан малтанхи уйăхра нормăна та тултарайман, август уйăхĕнче вара хăйне панă задание 339 процент тултарчĕ. Паллă стахановка Лаптенкова уйрăм кунсенче 3,5—4 норма тăвать, август уйăхĕнчи задание — 3 хут иртттерсе тултарчĕ. Çавăн пекех август уйăхĕнче Бардасова юлташ нормăна 297 процент, Маськин юлташ 270, Ортикова—227 процент тултарнă. Сентябрĕн малтанхи кунĕсенче те вĕсем çавăн пек результатсемех кăтартса ĕçлерĕç.

Торф предприятийĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, çулталăк программине августăн юлашки кунĕсенчех тултарнă. Унтанпа эпир планран иртттерсе чылай нумай торф кăлартăмăр. Пирĕн çитĕнĕве хакласа, ЧАССР Совнаркомĕ пирĕн предприятие куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тата 20 пин тенкĕ укçа памалла тунă. Çакă вăл пирĕн коллектива тата тимлĕрех ĕçлеме хавхалантарать. Рабочисемпе работницăсем Хĕрлĕ ялава çирĕппĕн тытса тăма пулаççĕ.

Хальхи вăхăтра эпир кăларнă торфа типĕтетпĕр тата каравансене татсататпăр. Кунсăр пуçне, 1943-мĕш çулхи сезона хатĕрленес ĕçе те туса пыратпăр. Рабочисем халĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, татах та пысăкрах çитĕнÿсемшĕн кĕрешеççĕ.

Е. РОЗОВ,
Çĕмĕрлери торф предприятийĕнчи главнăй инженер.

Вăрман ĕçĕнчи стахановецсем

ЙĔПРЕÇ. Виççĕмĕш кварталта чугунçул валли вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе Йĕпреç районĕ аван ĕçлерĕ. Район вутă касас плана 108 процент, турттарассине 143 процент тултарса, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Шупашкар районĕ касса хатĕрлессине 98,9 процент, турттарассине 112 процент тултарнă.

Йĕпреç леспромхозĕ вăрманта ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва лайăх организациленĕ. Рабочисем кулленех ик-виçĕ норма тултарса ĕçлеççĕ. Сентябрĕн 12-мĕшĕнче 207 çын çуран, 189 çын лашапа ĕçлесе, 414 кубометр вутă касас тата 279 кубометр турттарас вырăнне, 448 кубометр касса хатĕрленĕ, 469 кубометр турттарнă, çапла вара пĕр кунхи задание 168 процент тултарнă.

Малтанхи вăхăтсенче лучковăй пăчкăсемпе 15—20 çын çеç ĕçленĕ пулсан, халĕ вĕсемпе ĕçлекенсен шучĕ 135 çынна çитнĕ. «Тымар» колхоз участокĕнче ĕçлекен мĕнпур рабочисен хисепĕнчен 60 проценчĕ лучковăй пăчкăсемпе ĕçлеççĕ. Çапла вара кашни рабочиех куллени нормăна 150—200 процент тултараççĕ. Лучковăй пăчкăпа ĕçлекен В. Чураков («17-мĕш Партсъезд» колхозран) август уйăхĕнче 52 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. Вăл кунне 2 кубометр касас вырăнне 5—6 кубометр вутă касать, ĕçе ирхине 6 сехетре пуçлать те каçхине 7 сехетчен ĕçлет. Вăл трехсотник. Нумай пулмасть ăна леспромхозăн куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавне панă. Çавăн пекех А. Шарков юлташ та нормăна 180 процент тултарать.

Шупашкар районĕнчен ĕçлеме килнĕ колхозниксем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. «Хĕрлĕ Çар» колхоз членĕ М. Яковлев юлташ лашапа ĕçлесе куллен икшер норма тултарать. Вăл август уйăхĕнче 44 кубометр вырăнне 110 кубометр вутă турттарнă. Çавăн пекех Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕ Н. Кириллов сентябрь уйăхĕн планне 10 кун хушшинче 150 процент тултарчĕ.

Чугунçул валли вутă хатĕрлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван организациленĕ. Кашни участокрах кăтарту хăмисем пур. Унта кулленхи ĕçĕн итогĕсене çырса пыраççĕ. Агитаторсем рабочисем хушшинче ялахах калаçусем туса иртттереççĕ, хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Агитатор Н. Савин — лучковăй пăчкăна хăйракан мастер, вăл рабочисене лучковăй пăчкăпа ĕçлеме те вĕрентет. Халĕ вăрманта ĕçлекен рабочисем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва сарса пыраççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Нормăсене тултарса пыраççĕ

«Кожупряжь» артелĕн çăматăсем тăвакан цехĕнчи рабочисем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн кулленхи нормăсене ытлашшипех тултарса пыма обязательствăсем илнĕ.

Çăматă тăвакан Е. Ульянова, А. Кожурева, А. Платонова сменăра виççешер мăшăр çăматă тăвас вырăнне 4-шар мăшăр тăваççĕ. Цехри рабочисем хăйсем илнĕ обязательствăна кулленех 130 процент тултараççĕ.

Е. ЯРОВКИН,
цех начальникĕ.

Пирĕн районри ĕççынниcен парнисем

СĔНТĔРВĂРРИ. (**Телефонпа**). Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăри рабочисемпе работницăсем тата служащисем Октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уйрăмшарăн тата коллективлă парнесем пухса яма чĕнние районри ĕççыннисем хапăл туса йышăнчĕç.

Çак чĕнĕве сÿтсе-явнă хыççăн «Красная Армия» колхозăн членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене Октябрь уявĕ ячĕпе парне яма 25 килограмм типĕтнĕ какай, 10 килограмм пыл, 40 килограмм тулă çăнăхĕ, 100 çăмарта, 5 килограмм çу хатĕрлеççĕ.

«Осоавиахим» колхозран (Сутчево ялсовечĕ) 30 килограмм какай, 1 центнер çĕрулми, 100 çăмарта, 5 килограмм çу яма йышăннă.

«Восток» колхозăн (Олтикасси ялсовечĕ) членĕсем 50 килограмм какай, çур центнер тулă сухари, çу тата ытти продуктсем яма шутласа хунă.

Малтанлăха пухăннă сведенисем тăрăх, районри ĕççыннисем пĕтĕмпе тĕрлĕ апат-çимĕçсемпе япаласем 300 пăт чухлĕ посылкăсем туса яма шутлаççĕ, вăл шутра тулă çăнăхĕ 1,5 тонна, çу 75 килограмм, çăмарта 2000 штука, çĕрулми 1,5 тонна тата ытти продуктсем те пулаççĕ.

К. РОСТОВЦЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (**Телефон тăрăх**). Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеççĕ. Çак кунсенче ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комисси тĕрлĕрен ăшă япаласем, чылай пухнă. Уйрăмăн илсен, колхозниксем боецсем валли 300 тир, 22 кĕрĕк пиншак, 260 килограмм ытла çăм, 40 мăшăр çăматă, 21 мăшăр тăла, 34 ăшă кĕпе, 30 кальсон, 42 алшăлли, 12 простыня, 59 мулаххай, 9 мăшăр ăшă алса пуçтарса пачĕç. Кусемсĕр пуçне нумаях пулмасть фронта 30 мăшăр çăматă ярса панă.

Ăшă тумтирсем пуçтарас тĕлĕшпе «Красный Токанаш», «Красный воин» колхозсенчи колхозниксем лайăх ĕçлеççĕ. «Красный Токанаш» колхоз колхозникĕсем пĕр кĕрĕк пиншак, 29 тир, 20 килограмм çăм, «Красный воин» колхоз членĕсем 20 тир, 20 килограмм çăм тата ытти япаласем те пуçтарса панă.

М. КУЗЬМИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ТАСС опровержениĕ

Ют çĕршывсенчи пичетре çырнă хыпарсем тăрăх, совет самолечĕсен пĕр ушкăнĕ çак кунсенче Болгарири халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пăрахнă пулать. ТАСС çакна пĕлтерме полномочи илнĕ: çав хыпарсем пулман ĕçе кĕретĕнех провокацилĕ шухăшпа туртса кăларнă япала пулса тăраççĕ.

Совет Союзĕн Геройне Геннадий Габайдулович Габайдулин юлташа

Сире Совет Союз Геройĕн званине панă ятпа хĕрÿллĕн ырă сунса саламлатпăр. Отечественнăй вăрçă фронтĕнче хăюлăхпа геройлăх кăтартнă хамăрăн землякшăн пĕтĕм чун-чĕререн савă натпăр. Пирĕн тăван çĕршывăн ылханлă тăшманне хирĕç пыракан кĕрешÿре çĕнĕ çитĕнÿсем тума сунатпăр.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ
Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.
ВКП(б) Чăваш Обкомĕ.

Совет Союз Геройĕ Габайдулин юлташ земляксем хушшинче

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çав ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулти мартăн 24-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх сержант Габайдулин Геннадий Габайдуловича, Ленин орденĕпе «Золотая звезда» медалĕ парса, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Халь Габайдулин юлташ хăйĕн тăван ялне—пирĕн республикăри Комсомольски районри Тукай ялне — таврăннă.

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче партин Комсомольски районри активĕ лекци итлеме пухăнчĕ. Габайдулин юлташ унта хăйĕн геройла ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Совет Союз Геройĕ Габайдулин юлташ отечественнăй вăрçăра совет воинĕсем çавтери паттăррăн çапăçни çинчен каласа панине итленĕ хыççăн, партин Комсомольски районри активĕ тăшмана хăвăртрах çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшу пама, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене васкавлăн вĕçлесе çитерес, колхозсемпе колхозниксен государство умĕнчи обязательствисене парса татас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас, боецсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме пулчĕ. Парти активĕ рабочисен, колхозниксен тата служащисен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвне анлăн сарас тĕлĕшпе массăсем хушшинче политикăллă ĕçе вăйлатма йышăнчĕ.

Г. МИРОНОВ.
ВКП(б) Комсомольски райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Фронтовиксен делегацийĕ Чăваш республикинче

Пирĕн республика шефа илнĕ Н-ски чаçăн делегацийĕ çак кунсенче Канашри вагонсем юсакан заводра тата Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозра пулчĕ. Фронтовиксемпе рабочисем, служащисем тата колхозниксем хушшинче ăшă кăмăллă калаçусем пулса иртрĕç.

Вагонсем юсакан заводăн пĕр цехĕн илемлĕ те анлă пÿлĕмне кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче халăх тулчĕ. Унта пухăннă çынсем фронтовиксем совет воинĕсен хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен каласа панисене тимлĕн итлерĕç.

— Хамăрăн фронта кайнă юлташсен вăрçăри паттăрлăхĕсемпе хавхаланса, эпир татах тимлĕрех, пурнăçа шеллемесĕр ĕçлĕпĕр,—тесе шантарать цех коллективĕн ячĕпе мастер Алтанин юлташ.

— Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем тăшманпа мĕн тери хастарлăн çапăçаççĕ, эпир те çавăн пекех тăрăшса ĕçлĕпĕр, — тесе калать партбюро секретарĕ Сорокин юлташ.

Унтан заводри рабочисем, фронт заказĕсене пурнăçа кĕртекен стахановецсем хăйсен ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен каласа кăтартрĕç.

Митинг Чăваш республики шефа илнĕ чаçăн боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем патне çыру яма йышăнчĕ. Çырура Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне виççĕмĕш уйăх хăйĕн аллинче тытса тăракан заводри стахановецсен, бригадăсен тата сменăсен ĕçри паттăрлăхĕ çинчен каласа панă.

— Эпир малашне те ĕç тухăçлăхне хăпартма, мĕнпур прогрессивнăй. этемлĕхĕн ирсĕр тăшманне çĕнтермешкĕн ытларах та ытларах продукци туса пама сăмах паратпăр, эсир вара юлташсем — боецсем, командирсем тата политработниксем — тăшманпа хаяррăн çапăçăр, тăшмана ним шеллемесĕр пĕтерсе тăкăр, нимĕçсен фашистла бандичĕсене пирĕн тăван çĕршывран пĕр канăç памасăр хăвалăр, — тесе çырнă завод коллективĕ çав çырура.

Кольцовкăна хăнасем каçхине çитрĕç. Кăнтăрла тăрăшса ĕçленĕ колхозниксем вĕсене клубра ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем батальоннăй комиссар Орлов юлташ тухса каланине пĕр сăмах сиктермесĕр итлерĕç. Делегаци нимĕç фашисчĕсен тискерлĕхĕсем çинчен, красноармеецсенчен, колхозниксенчен çав тери мăшкăллани çинчен каласа парсан, пухăва пухăннă çынсен сăнĕсем улшăнчĕç, аллисем чăмăртанчĕç.

Комиссарăн сăмахне ответлесе, колхоз председателĕ Васянин юлташ хăйсен ĕçĕнчи çитĕнÿсем çинчен, колхозниксем вăрçăри пек ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Тырпулсене уйхиртен пухса кĕртсе капана хывса лартнă. Тĕштырăсенчен 70 процентне çапнă. Государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех тултарнă. Колхозниксем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. 70 çулхи Иван Саканинăн тăвата ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта. Вăл нормăсене иртттерсе тултарса ĕçлет.

Кольцовка колхозникĕсем нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас вăхăта çывăхартас тĕлĕшпе тата ытларах тăрăшса ĕçлетпĕр тесе фронтовиксене çирĕп сăмах пачĕç.

Сталинградшăн пыракан çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Юн юхтарса халран каякан тăшман малаллах талпăнать. Юн тăкăнакан хаяр çапăçусем кунĕн-çĕрĕн лăпланмаççĕ. Час-часах штыкпа тăрса çапăçасси пуçланса каять. Кашни урама, кашни çурта хăйсен кăкăрĕпе хÿтĕлесе, совет воинĕсем гитлеровецсене вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Хулана хÿтĕлекенсем, тат-ти-сыпписĕр контратакăсем туса, тăшмана халран яраççĕ, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Хулан çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче пирĕн войскăсем, хулара уйрăмах палăрса тăракан высотана тытса илсе, хăйсен ăнăçлă ĕçне малалла аталантарса пынă. Румынсен чаçĕ йышăннă рубежсене ĕнер пирĕн тинĕс пехотин подразделенийĕ атакăланă. Çав атака питех те вăйлă та хаяр пулнă. Моряксен йышĕнче 400 çын пулнă, румынсен—1000 çынна яхăн. Пулса иртнĕ çапăçура противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 900 çын ытла пĕтнĕ.

Урамри çапăçусенче пĕчĕк подразделенисем активлăн кĕрешеççĕ. Совет боецĕсемпе командирĕсем пысăк пуçарулăхпа тавçарулăх кăтартаççĕ.

Нимĕçсем пĕр çуртăн подвалĕнчен вăйлăн персе тăнă. Çакă вăл пирĕн пехотăна малалла куçма чăрмантарнă. Подвал патне гвардин красноармеецĕ Кептя юлташ шăвăнса пынă. Подвалра вырнаçса ларнă нимĕç автоматчикĕсем çине гранатăсем вăркăнтарса, вăл подвала çĕмĕрсе кĕнĕ те унта чĕрĕ юлнă гитлеровецсене штыкпа тăрса çапăçса вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр урам патне пымалли вырăна нимĕçсем пулеметсенчен персе тăрса хÿтĕленĕ. Гварди политрукĕ Михаил Ухов боецсемпе пĕрле малалла ывтăннă та фашистсен пулеметчикне пĕтерсе тăкнă, унтан пулемета тытса илсе, унпала тăракан противник çине пеме тытăннă.

Пĕр паха пункта тытса илес тесе, нимĕçсем пирĕн Н-ски чаçа фронтран тата флангран пырса çапма хăйсен пехотин икĕ полкне тата 10 танк атакăна кĕртсе янă. Гвардеецсем хăйсем йышăннă вырăна пур енчен те хÿтĕлесе тăнă. Фашистсен танкĕсене пирĕн лайăх пытарса вырнаçтарса лартнă противотанковăй тупăсен батарейисем çĕмĕрнĕ. Тăшманăн пехотине совет стрелокĕсемпе автоматчикĕсем тата минометчикĕсем, çуртсен çийĕсем çине тата баррикадăсем хыçне вырнаçнăскерсем, пĕтере-пĕтере тăкнă.

Пирĕн танкистсем, пехотăпа, артиллерипе тата авиаципе таччăн çыхăнса тăрса, тăшмана хирĕç кĕрешеççĕ. Бубнов лейтенантăн танковăй подразделенийĕ пĕр çапăçура тăшманăн 17 туппине, 9 пулеметне тата салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра танкистсен пысăк мар ушкăнĕ фашистсен 18 танкĕн атакине путлантарнă.

Пирĕн саперсен пысăк мар подразделенине тăшман автоматчикĕсен взвочĕ тата 30 кавалерист атакăланă пулнă. Тăшман чугунçула тытса илме хăтланнă. Саперсем фашистсене çывăха пыма панă та кайран гранатăсемпе çапа-çапа аркатнă. Çавăнта хăйсен 40 виллине пăрахса хăварса, нимĕçсем каялла чакнă. Часах нимĕçсем контратакăна пехотăн икĕ батальонне кĕртсе янă. Саперсем вĕçне çитиччен çапăçнă. Вĕсем пурте çапăçура пуçĕсене хунă, анчах каялла чакман. Çав танмар çапăçура 200 фашиста яхăн пĕтерсе тăкнă.

Ц. ЩУКИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 25 автомашинине тата боеприпассем тиенĕ 30 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче урамсенче хаяр çапăçусем пынă. Противник пехотин тата танкĕсен пысăк вăйĕсем авиаци пулăшнипе совет войскисен позицийĕсене татти-сыпписĕр атакăланă. Н-ски гвардейски соединени противникăн 12 атакине сирсе янă, нимĕçсен 42 танкне пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿснĕ. Тепĕр участокра пирĕн пехотăпа артиллери виçĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă, 44 танк персе çĕмĕрнĕ, 18 оруди, 30 автомашина, минометсен 6 батарейине тата 39 пулеметнăй точкăна пĕтерсе тăкнă.

Атăл çинчи çар флотилийĕн карапĕсем юлашки кунсенче нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче чылай пыра-пыра çапнă. Пирĕн карапсем çинчи артиллери пенипе нимĕçсемпе румынсен салтакĕсене сахалтан та икĕ батальон пĕтерсе тăкнă, артиллерин 8 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерех пирĕн войскăсем çаплах активлăн çапăçса кăштах малалла кайнă. Çав çапăçусенче пирĕн чăсусем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити вĕлерсе тăкнă, нимĕçсен 10 танкне, артиллерин 4 батарейине, минометсен 7 батарейине, противотанкськăй орудисен 2 батарейине тата 66 пулемет пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне тата пирĕн боецсем противникран 11 оруди, 13 пулемет, 4 миномет тата пĕр радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чăсăн танкисчĕсем нимĕçсен 13 танкне персе çĕмĕрнĕ, 16 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тарлецкий командирăн роти противникăн йышлăрах вăйĕсемпе çапăçса нимĕçсен темиçе дзотне тытса илнĕ тата 90 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски соединенин чăсĕсем противникăн наступлени пуçласа янă танкĕсемпе тата пехотипе çапăçнă. Совет боецĕсем тăшмана хирĕç çирĕп тăнине пула, нимĕçсен каялла чакма лекнĕ. Çавăн чух вĕсен 5 танк, 24 автомашина тата 200 салтакпа офицер таран пĕтнĕ.

* * *

Воронеж районĕнче нимĕçсен тăватă полк таран пехоти 75 танк пулăшнипе наступлени пуçласа янă. Противника хирĕç пирĕн пехота чăсĕсем, артиллери, минометсем пеме тытăннă, тата совет авиацийĕ пыра-пыра çапнă. Тăватă сехет хушши çапăçнă хыççăн нимĕçсен фашистла войскисен атакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче çĕрпер гитлеровец вилсе выртса юлнă. Пăртак тăрсан, нимĕçсем пирĕн позицисене тата икĕ хутчен атакăлама хăтланнă, анчах вĕсен атакисем ăнăçман. Çав çапăçусенче тăшманăнне 14 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 1.500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллери нимĕçсен 4 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Гюнтер Глетцер ефрейтор патне пĕр Генрих Якобшнейер ятлăскер çапла çырать: «Кунта хĕпĕртемелли сахал, хуйхă темĕн чухлех. Пур çĕртре те вăрçă сисĕнет, ишĕлÿ йĕррисем куçа курăнса тăраççĕ. Англи летчикĕсем пирĕн пата час-часах килме пуçларĕç. Бомбăсенчен пытанмалли шăтăксем пирĕн тĕп хваттер вырăнне пулса тăчĕç. Ĕнер «томмисем» тăр-кăнтăрлах Дуисбург çине килсе бомбăсем тăкрĕç... Кунта вырăс хĕрарăмĕсене эшелонĕ-эшелонĕпе илсе килчĕç. Вĕсем промышленноçра ĕçлеççĕ. Вĕсем начарланса ывăнса çитнĕ. Хăшпĕрисем çав тери пĕтсе кайнипе ура ярса пусаймаççĕ, выçăпа вилеççĕ... Пирĕн патăрта хăрушă хыпарсем сарăлаççĕ. Кашни кунах мĕн те пулин кĕтмен ĕçсем, чарса лартма пултарайми ĕçсем сиксе тухма пултараççĕ. Çаксем çинчен кăна шухăшласан та пуç çаврăнма тытăнать, хăраса ÿкетĕн».

* * *

Запорожье облаçĕнчи Рождественка ялĕнче нимĕçсен офицерĕ питех те ватăлса çитнĕ Елена Поленюк колхозница патĕнче украинăлла çырнă темиçе совет хаçачĕ тупнă. Çав офицер приказĕ тăрăх гитлеровецсем ватă карчăка тем тери тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. Бандитсем Поленюкăнне кăкăрĕсене касса илнĕ, çурăмĕ çинче пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр çунтарса кăларнă, хăйне çакса вĕлернĕ.

* * *

Гитлерăн Норвегири хÿрешки Квислинг Берлинран приказ илнĕ. Çав приказ тăрăх Норвегири 18—45 çула çитнĕ фашистсене мобилизацилесе пурне те Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ямалла. Приказ квислинговецсене хăратса пăрахнă. Вĕсем нумайĕшĕ партирен тухатпăр тесе заявленисем панă. Осло хулинче штурмовиксен пысăк пайĕ регистрацие пыман, нумайĕшĕ тарнă. Хедмарк облаçĕнче штурмовиксен 8 отрячĕ арканса пĕтсе ларнă. Норвегирен тухса тарма тăнă 60 штурмовика Швеци чиккинче тытнă. Халĕ Квислинг хăйĕн штурмовикĕсене шыраса тытма уйрăм отрядсем организациленĕ.

Сентябрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хĕрÿллĕ çапăçусем пынă. Пирĕн чăссем противникăн темиçе хут тунă хаяр атакисене сирсе пăрахнă. Нимĕçсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ, вĕсем самолетсемпе васкасах подкрепленисем илсе пыраççĕ. Н-ски танковăй часть нимĕçсене çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă, 600 гитлеровеца, тăшманăн 6 танкне тата темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă. Гварди майорĕ Никитин чăсĕн боецĕсем 160 гитлеровеца вĕлернĕ тата артиллерин пĕр батарейипе минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă. Красноармеец Кузнецов юлташ противотанковăй пăшалпа персе нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрнĕ.

Атăл çинчи çар флотилийĕн карапĕсен артиллерийĕ противникăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене пыра-пыра çапнă. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чăсĕ, вирлĕн атакăласа, противника халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 250 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕн боецсем 3 оруди, 2 миномет тата 4 пулемет тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски соединени противникăн темиçе атакине сирсе янă, нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Шошин лейтенант тăшманăн бомбардировщикне противотанковăй пăшалпа персе ÿкернĕ. Старши лейтенант Мирохин пулеметпа персе «Хейнкель—111» самолета вут тивертнĕ. Икĕ самолечĕ те пирĕн войскăсем тăракан территори çине ÿкнĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре гитлеровецсем, пĕр çĕре чылай пысăк вай пухса тăратса, пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн чăссем противникăн атакине сирсе янă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, артиллерин пĕр батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă. Унтан пирĕн боецсем контратака тунă та противника кăштах каялла чакарнă.

* * *

Синявино районĕнче противник хăйĕн маларах çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе тăрăшни ăнăçман. Пирĕн войскăсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 28-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 49-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтаксем çав полкăн ротисенче 20-шер тата унтан та сахалтарах çын юлни çинчен каласа панă. Пирĕн зенитнăй артиллери пенипе тата пехота хĕçпăшалĕпе персе нимĕçсен 16 самолетне ÿкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 11-мĕш танковăй дивизийĕнчи 111-мĕш мотострелковăй полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Эрвин Шольтц çапла каласа панă: «Июль уйăхĕнче эпĕ запасной батальонпа пĕрле Тури Силезирен фронта кайрăм. Брянскран Орела кайнă чухне эпĕ çĕмрĕк вагонсемпе хуçкаланса пĕтнĕ цистернăсем питĕ нумай куртăм. Салтаксем мана партизансем çар грузĕсем тиенĕ поездсене час-часах ÿпĕнтерсе яни çинчен каларĕç. Çав участокра пĕр уйăх ытла ĕнтĕ нимĕçсен бронепоезчĕ каллĕ-маллĕ çÿрет, анчах та аварисем чарăнмаççĕ. Партизансем чугунçул çине ĕлĕкхи пекех минăсем хураççĕ тата кĕперсене çĕмĕреççĕ.

Фронтра эпĕ нумай пурăнмарăм. Малтанхи çапăçусенчех пирĕн ротăн хăйне хушса панă 7 танкĕ тата салтакĕсем нумай пĕтрĕç. Юлашки çапăçура мана амантрĕç. Эпĕ юлташсене мана хăйсемпе пĕрле илсе кайма ыйтрăм. Анчах та вĕсем çапла каларĕç: «Пирĕн санпа аппаланса тăма вăхăт çук, вырăссем çывăх ĕнтĕ», терĕç. Эпĕ блиндажрах юлтăм та вара тыткăна парăнтăм».

* * *

Курск облаçĕнчи Захаровка ялĕнче нимĕç коменданчĕ çитĕннĕ çынсемпе ачасене пурне те сентябрĕн 4-мĕшĕнче шкула пыма хушнă, унта хул кастармалла, тенĕ. Хресченсем хул кастарма килĕшмен те шкула кайман. Вара комендант салтаксем пулăшнипе çынсен пысăк ушкăнне картишне хăваласа пухнă. Нимĕç врачĕсем 26 çынна, çав шутра 14 çулхи Петр Солнцева, 11 çулхи Вера Грачевăна, 9 çулхи Екатерина Дворниковăна тата ыттисене те суйласа илнĕ те вĕсенчен медицинăра кăтартнă нормăсене пăхмасăрах юн нумай юхтарса илнĕ. Юн нумай кайнипе 9 çын вилнĕ, вăл шутра 5 çамрăк пулнă.

* * *

Брест районĕнче (Францире) ирĕклĕ стрелоксен ушкăнĕ нимĕç патрульне тапăннă. Тăватă гитлеровеца вĕлерсен, патриотсем тарса пытаннă. Мальтруэ çывăхĕнчи вăрманта эсэсовецсен отрячĕ засадăна лекнĕ те, ăна ирĕклĕ стрелоксем пĕтерсе тăкнă. Патриотсем 11 автомат тата патронсем тытса илнĕ.

Комсомолецсен фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхĕ

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, республикăра çĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртес тата вĕсене типтерлесе хурас тĕлĕшпе ВЛКСМ Обкомĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 5-мĕшне çитиччен фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттерме палăртнă.

ВЛКСМ райкомĕсемпе МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕçе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене пурне те мобилизацилемелле. Пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртес ĕçре комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинче социализмлă ăмăртăва хĕрÿллĕн сарса пырса, государствăна пахча-çимĕçсем парас обязательствăсене срокра пурнăçлассишĕн кĕрешмелле.

Пахча-çимĕçсене вăхăтра пуçтарса кĕртес ĕç пысăк тимлĕх тата хăвăртлăхпа пахалăх ыйтать. Çавăнпа та çак ĕçе райцентрсенчи тата хуласенчи комсомолецсемпе çамрăксене, çавăн пекех шкул ачисене те, ĕç пĕтнĕ хыççăн, уйрăмах канмалли кунсенче, çывăхри колхозсене пулăшма ярассине организацилемелле.

ВЛКСМ Обкомĕ комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенче уйри тата складри тырăсене хураллама комсомолецсемпе çамрăксен посчĕсене организацилеме, колхозсенче пахча-çимĕçсене усрамалли хранилищĕсене хатĕрлесе çитернине тĕрĕслемешкĕн рейдсем туса ирттерме сĕннĕ. Кусемсĕр пуçне пахча-çимĕç усрамалли подвалсемпе хранилищĕсене ремонтлама комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене тумалла.

Хастарлăн ĕçлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Сентябрĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăннă май районри колхозсенче производствăллă çĕкленÿ хăвăрттăн ÿссе пырать. Нумай колхозсем уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе пыраççĕ. Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи колхозсем иртнĕ çулсенче уйхир ĕçĕсенче кая юлса пынă пулсан, кăçалхи çул вĕсем малти вырăна тухма пултарчĕç. «Красная Шатьма», «Правда» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем кĕлтесене капана хывса çитернĕ, ыран-паянах авăн çапса пĕтереççĕ. Ку колхозсем государствăна тырă памалли графиксене те аван пурнăçлаççĕ.

Уйхир ĕçĕсене туса пынипе пĕрлех районри чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес тата вĕсем валли вите-сем хатĕрлес ĕçсене те начар мар туса пыраççĕ. Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи «Красный Порденер», Типçырма ялсоветĕнчи «Камыш» тата «Буксир» колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Контрактациленĕ çамрăк пăрусене фермăсене пĕрлештернĕ.

Пур ĕçе те пĕр вăхăтра туса пынă пирки, чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе те хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Яманак ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхоз 100 гектар, «Красный богатырь» колхоз 30 гектар, Медикассинчи «Вторая пятилетка» колхоз 32 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

«Правда» колхозри сухаçăсем кĕрхи çĕртме тунă çĕрте паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Колхозница Е. Степанова 4 лашапа ĕçлесе кунне 3 гектара яхăн сухалать. Çавăн пекех «Красное Сормово» колхоз колхозникĕ С. Григорьев юлташ та 2,75—3 гектар сухаласа, нормăна ытлашшипех тултарать.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Ют çĕршывсенче

Югослави партизанĕсен активлă кĕрешĕвĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири партизансен çарĕн штабĕ çапла пĕлтерет: юлашки эрнере нимĕçсен, итальянецсен тата усташасен чăсĕсем темиçе секторта партизансен позицийĕсем çине наступлени тума пуçланă. Партизансем тăшманăн атакисене хастарлăн сире-сире яраççĕ. Фашистсен авиацийĕ партизансен позицийĕсем çине тата тыла бомбăсем пăрахать.

Босански Грахов патĕнче партизансен отрячĕсем итальянецсен Дрвар хули еннелле куçма хăтланнă колоннисене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Итальянецсен çар эшелонĕнче, Огулин—Сплит чугунçулĕ çинче партизансем тытса илнĕскерĕнче, ытти çар материалĕсем хушшинче 250 пин ытла патрон пулнă. Партизансен пĕр отрячĕ Мостер хулинче противникăн бензин тултарнă 300 пичкине вут тивертсе çунтарса янă.

Темиçе участокра партизансен чăсĕсем Италипе Германи оккупанчĕсемпе тата усташасемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Имотоки районĕнче тата Купрес патĕнче уйрăмах хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Баня-Лука облаçĕнче пысăк çапăçу пырать, çав çапăçăва икĕ енчен те нумай войскăсем хутшăннă. Çав секторта çапăçакан партизансем темиçе отрячĕ нимĕçсен чăсĕсене çĕнтернĕ.

Германире рабочисем питĕ нумай çитмеççĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибюн де Женев» хаçат çакна палăртать: ютçĕршывсенчен обязательнăй йĕркепе рабочисем илсе килеççĕ пулсан та, Германире рабочисем питĕ нумай çитмеççĕ.

Предпринимательсем ĕç кунне каллех икĕ сехет тăснă, апла пулсан та, туса кăларакан продукци пур нушасене те саплаймасть. Германия оккупациленĕ çĕршывсенчи заводсене эксплоатацилет, анчах та вĕсен тухăçлăхĕ çителĕксĕр. «Рабочисем тата инженерла-техникла работниксем тăрăшни çителĕксĕр, саботажла ĕçсем час-часах пулса пыраççĕ». Лаваль француз рабочийĕсене Германие яма хăтланни пăчланса ларнă. «Çакăнтан пĕрех те тĕлĕнмелле мар,—тесе çырать хаçат,—французсем нимĕçсене пулăшасси çинчен йĕрĕнсе шухăшлаççĕ, вĕсем хăйсен тăшманĕсем валли хĕçпăшал тума килĕшмеççĕ. Германия пăшăрханать, вăл, паллах ĕнтĕ, Лавале рабочисене çĕнĕрен хĕсме васкатать». Çавăнпа Виши правительстви арçынсемпе хĕрарăмсемшĕн ирĕксĕрле ĕç йĕрки тума шут тытнă. «Анчах та Франци халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн çавăн пек йывăр результатсем паракан законпа килĕшĕ-ши вара?»—тет юлашкинчен хаçат.

Гитлеровецсем Венгри халăхĕнчен юлашки татăк çăкăра туртса илеççĕ

ВЕНГРИН СНАБЖЕНИ МИНИСТРĔ УÇÇĂНАХ ЙЫШĂННИ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Германин хуçалăх министрĕ Функ Венгрие пырса кайнă хыççăн (Функ унта Германие продовольстви ытларах тăратма хушнă). Венгрин снабжени министрĕ Лошанци «Дас шафенде унгари» журналра «Венгрия Европăра çар хатĕрĕсем тăратас тĕлĕшпе тÿсекен жертвăсем» ятлă статья пичетленĕ. Автор унта гитлеровецсем Венгрие çаратнине йышăнать. «Хальхи вăрçăра,—тесе çырать вăл,—Венгрия юн çеç тăкмасть, вăл тата экономика тĕлĕшпе те пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Хăйĕн мĕнпур ытлашши продукцине вăл Германипе Италие парать. Сăмах кунта ялти халăхăн пурнăç шайне ытла та чакарнипе ытлашши юлакан продукци çинчен пырать. Пурнăç шайĕ кунта Германиринчен нумай каярах тата кашни çын пуçне норма тăрăх паракан продуктсен хисепĕ ытти çĕршывсенчинчен нумай каярах. Çакна пула кăна ĕнтĕ Венгрия тĕнĕл держависене чылай нумай тырă, çĕрулми, пăрçа йышши культурăсем, пахча-çимĕçсем тата консервăсем парса тăрать. Венгрия тĕнĕл держависене тата чĕртавар та парса тăрать. Юлашкинчен, Венгрия Германие квалификациллĕ рабочисем ячĕ. Çĕршывра чĕртавар ытларах та ытларах çитменнине саплама пултăр тесе, Венгри правительстви халăха продовольстви сахалтарах çиме хушрĕ тата искусственнăй пир-авăрсемпе ытти эрзацсем тума тытăнчĕ».

Нимĕç оккупанчĕсем Югославин экономикине пĕтерсе лартаççĕ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави экономики йăлтах юхăнса кайнă. Германин çар промышленноçĕ валли ĕçлекен предприятисем çеç васкавлăн ĕçлеççĕ. Пир-авăр промышленноçĕ тĕрĕссипе пĕтсе ларнă ĕнтĕ. Пир-авăр предприятийĕсен нумайĕшĕн оборудованине Германие илсе кайнă. Çĕвĕç промышленноçĕн, хут, тирсăран, апат-çимĕç, машинăсем тăвакан тата ытти промышленноçсен те кунçулĕ çавăн пекех пулса тăнă. Нимĕçсем метала, рудана тата ялхуçалăх продукцине пуринчен ытла чĕрĕ халлĕн Германие илсе кайса, вĕсене унта ĕçлеççĕ.

Гитлерла «Донау цейтунг» çапла пĕлтернĕччĕ: Хорватире «çĕркăмрăк çитменни ытла та çивĕччĕн палăрать», çавăнпа та Павелич влаçĕсен «рентабельнăй мар» предприятисене нумайĕшне хупма тивнĕ. Хорватин суту-илÿ министерстви «строительство ĕçĕсене пурне те халех чарса лартмалли çинчен» приказ кăларнă. Пуçланă ĕçсене чарса лартнă. Çав приказа нимĕçсем стройматериалсене пурне те Германие яма хушнă пирки кăларнă.

Югослави промышленноçĕ юхăнса кайни тата çакăнтан та чылай килет: Сербипе Хорватири ĕçлеме пултаракан халăхăн пысăк пайне Германие ĕçлеме хăваласа кайнă. Хорват рабочийĕсем 70 пин çын таран Германи предприятийĕсенче ĕçлеççĕ. Рабочисем питĕ нумай çитмен пирки Павеличăн август пуçламăшĕнче уголовниксене тĕрмесенчен кăларма хушакан декрет кăлармалла пулнă.

Куллен кирлĕ таварсене тăвакан промышленность çав тери хытă чакнине пула, пасарсенче çав таварсем йăлтах пĕтсе ларнă. Югослави халăхĕ çаррăн тата çарамас çÿрет. Халăх тир-сăранран çĕленĕ ată-пушмак тăхăнма тахçанах пăрахнă ĕнтĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ТАТА ГОЛЛАНДИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: сентябрĕн 22-мĕшĕнче бомбардировка тăвакан авиацин самолечĕсем Лилль-Ланс районĕнчи промышленность объекчĕсене атакăланă. Бомбăсем Мазенгарбри силовой станцине лекнине палăртнă.

Бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ Эмденри металлурги заводне тапăннă. Бомбăсем тÿрĕ лекнĕ, пушарсем тухнă.

РУМЫНИ ХАÇАЧĔСЕМ ХРЕСЧЕНСЕНЕ ÇĂКĂР ÇИМЕ ПĂРАХМА ХУШАÇÇĔ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 23-мĕше. (ТАСС). Юлашки кунсенче Румыни хаçачĕсенче çакăн пек калакан статьясем пичетлене пуçларĕç: Румынин ялхуçалăхĕ Германие кирлĕ тырпулсем туса тăрсан çеç Румыния «Европăри çĕнĕ йĕркере» хăйĕн вырăнне йышăнма пултарать, теççĕ вĕсем. «Аргус» хаçат çапла çырать: кукуруза Германире апат-çимĕç продукчĕ пулса тăмасть, тет; çавăнпа та вăл румын хресченĕсене тĕштырă, вăл шутра тулă, ытларах акма сĕнет. «Курентул» хаçат румын хресченĕсене тĕштырă перекетлеме тата çăкăр çиме пăрахма сĕнет, çăкăр вырăнне кукуруза çиме хушать. Çакăнпа пĕрлех хаçат кукурузăн пысăкрах пайĕ кăçал пĕтнине тата кукуруза хакĕ пилĕк хут ÿссе кайнине йышăнать.

Румыни хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, хресченсем çăм пама килĕшмеççĕ, мĕншĕн тесессĕн вăл çăма Германие яма пухаççĕ.

АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ ТАНАНАРИВЕНЕ КĔНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Англи войскисем Мадагаскар утравĕн столицине — Тананариве хулине ситсе кĕнĕ.

КĔСКЕН

▲ Норвегире концентрациллĕ лагерьсенчен пĕринче Югослави çарĕнчен тыткăна лекнĕ 100 салтак выçăпа вилнĕ.

▲ Валенсире (Испания) нумаях пулмасть боеприпассен складне сирпĕнтернĕ. Тăватă çын вилнĕ, 7 çын аманнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

ОРС'у завода требуются для работы в аппарате ОРС'а квалифицированные бухгалтера. Для работы в столовых—зав. производством, повара, официантки, кухонные и пр. подсобные рабочие.
С предложением обращаться: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, д. 80, отдел кадров.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО" (гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21), имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—7 Дирекция.

ПРОПАЛ ЖЕРЕБЕЦ

Приметы: рыжий, на лбу узкая проточина, между ногами темные пятна, порода местная, год рождения 1939, кличка „Козлик".
Знающих местонахождение его просьба сообщить колхозу им. Калинина, Красноармейского района, того же сельсовета.

Колхозниксен патриотизмлă çĕкленĕвĕ

Тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсем гитлерла захватчиксене хирĕç паттăррăн çапăçнă вăхăтра пирĕн районри колхозниксем, çĕршыври ытти ĕççыннисем пекех, пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсемшĕн туса пыма тăрăшаççĕ. Вĕсем тăван Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва ытларах та ытларах тырпул, ялхуçалăх продукчĕсем парас тесе вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Районра пур колхозсем те уйри тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртрĕç. Социализмлă ăмăртăва сарса пынă май, фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх хушшинче эпир пучахлă тырпулсене пĕтĕмпех вырса пĕтертĕмĕр. Уйрăм колхозсенче ĕç тата пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пычĕ. Сăмахран, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ежов юлташ) вунăкунлăхра кĕрхи çурхи тырпулсене тата пăрçа йышши культурăсене, çак вăхăтрах йĕтĕне те, пĕтĕмпех пуçтарса кĕртсе капана хывнă. Паянхи куна колхоз авăн çапса тата çĕрулми кăларса пĕтернĕ.

Акмачихăрри «1 мая», «Подгорное» колхозсем те кĕске вăхăт хушшинче мĕнпур участоксем çинчи тырпула пуçтарса кĕртрĕç, çавăн хыççăнах вĕсем авăн çапма, çĕрулми кăларма тата пахча-çимĕçсем пухма организованно тытăнчĕç.

Турхантри «Комбинат» колхоз—районра пысăк колхозсенчен пĕри. Унăн 510 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕртмелле пулнă. Колхозниксен анлă масси ĕçе большевикла хастарлăхпа хутшăннă май, колхоз тырăсене вăхăтра пуçтарса кĕртрĕ, паянхи куна тыррăн 50 процентне çапса пухнă.

Тырпул пуçтарса кĕртес ĕçре малта пыракансен шутне Чăваш Улхашри «Искра» (председателĕ коммунист Шивкин юлташ), Питушкинĕри «Вперед», Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозсене те кĕртмелле. Вĕсем тырă вырса пынă вăхăтрах кĕлтесене капана хывас ĕçе те йĕркеллĕн туса пычĕç, çийĕнчех авăн çапма тытăнчĕç. Çавăнпа ĕнтĕ вăл колхозсем государствăна тырă памалли графика кашни пилĕккунрах ирттерсе тултарса пыраççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз сентябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 88 процент тултарнă.

Тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртни колхозниксен анлă масси уборкăра активлăн ĕçленинче курăнчĕ. Ĕçре вăйпитти колхозниксемпе пĕрле ватă колхозниксем тата çамрăк ачасем те пысăк хастарлăх кăтартрĕç, куллен лайăхрах та ытларах ĕçлессишĕн кĕрешрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 57 çулхи Фекла Величкова, Анастасия Алексеева юлташсем тырра çурлапа вырса куллен ĕç нормине 150 процент тултарнă. «Искра» колхоз членĕсем Федора Шереметькина, Анастасия Ортикова, Александра Селиванова колхозницăсем нормăсене 200 процент, уйрăм кунсенче 250 процент тултарса ĕçленĕ.

Чылай колхозсенче масса хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пыраççĕ. Тырă вырнă вăхăтра ялсенчи агитаторсемпе вулавçăсем хăйсен ĕçне уйра туса пычĕç. Вĕсем вăйĕпе куллен массăна çĕршывра пулса иртекен хыпарсемпе паллаштарнă, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа панă. Агитаторсен вăйĕпех колхозсенче вуншар стена хаçачĕ, темиçе çĕр боевой листоксем кăларнă. «Искра» колхозра, акă, 3 агитатор 10 боевой листок кăларнă, 30 ытла калаçу туса ирттернĕ, Молгачкинĕри «Молодая сила» колхозра пĕр уйăх хушшинче 12 номер стена хаçачĕ кăларнă.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци пуçарнипе унта бригадăсем хушшинче куçса çÿрекен хĕрлĕ ялав организациленĕ. Кунсăр пуçне тата кăтарту хăми ĕçленĕ, 3—4 кунта пĕрре стена хаçачĕ туха тăнă. Паллах, çаксем колхозниксен ĕçри энтузиазмне çĕклес тĕлĕшпе пысăк пулăшу панă.

Уйри тырпула пуçтарса кĕртес ĕçре хуларти ĕççыннисем те хутшăннă. Уйрăм учрежденисемпе организацисенче ĕçлекенсенчен уйрăм бригадăсем туса янисĕр пуçне, икĕ вырсарникун воскресниксем туса ирттернĕ. Вăл воскресниксене 3 пин çынна яхăн хутшăннă, вĕсем 700 гектара яхăн кĕлте йăтса капана хывнă, 10 гектар çĕрулми кăларнă, темиçе вуншар тонна авăн çапнă, тырă турттарнă т. ыт. те.

Сентябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне пирĕн район вырса пуçтарнă кĕлтесене капана хывас ĕçе 99 процент, авăн çапас ĕçе 54 процент ытла пурнăçланă. Кунсăр пуçне тата 138 гектар çĕрулми кăларнă, йĕтĕн татса тата махорка пуçтарса пĕтернĕ. Халĕхи вăхăтра пур колхозсенче те авăн çапас, çĕрулми кăларас, пахча-çимĕç пухас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ. Кашни колхоз кăçалхи ялхуçалăх çулне лайăхрах результатсемпе вĕçлессишĕн кĕрешет. Мĕншĕн тесен колхозниксем çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: вĕсен стахановла ĕçĕ фронтри боецсене паттăррăн çапăçма хавхалантарать, çĕршыв оборонине тĕрĕклетме пулăшать.

И. КОТЛЕЕВ,
ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11549

Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 53 24 п. н.